**Туслăх пытăр ĕмĕре**

*( аслă тата шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ валли)*

*(Çак ĕçпе музыка ертӳçисем, воспитательсем, кĕçĕн класра вĕрентекенсем усă курма пултараççĕ )*

Ĕçе тăваканĕ: музыка ертӳçи Яковлева Ирина Петровна, МБДОУ «Ача сачĕ №5», Канаш хули.

**Тĕп тĕллевĕсем:**

- И.Я. Яковлевăн ĕçĕ–хĕлне тĕплĕнрех çирĕплетсе хăварасси, ăна хисеплесе асра тытма вĕрентесси;
- И.Я. Яковлев халалне аса илсе чăвашпа вырăс халăхĕн туслăхне юратма, упрама, çирĕплетме вĕрентесси;

а) ваттисен сăмахĕсене аса илтересси;

б) икĕ халăхăн пĕрпеклĕхне юрăра, ташăра, вăййăра кăтартасси;

**Туса ирттернĕ ĕçсем :**

1.Чăвашпа вырăс халăхĕн юррисене, ташшисене вĕрентни.
2. Ваттисен сăмахĕсемпе паллаштарни.
3. И.Я. Яковлев ача- пăча валли çырнă калавĕсемпе халапĕсене паллаштарни.

**Ĕç йĕрки.**

*« Илемлĕ, илемлĕ» юрă янăрать. Ачасем зала карталанса утса кĕреççĕ, палăртнă вырăнĕсне пырса вырнаçаççĕ .*

**Ертсе пыракан**: Ачасем, эпир паян пысак уяв ирттерме пуçтарăнтăмăр. Ака уйĕхĕн 25- мĕшĕнче пĕтĕм чăваш халăхĕ И.Я. Яковлевăн çуралнă кунне паллă тăвать. Кам –ха вăл И.Я. Яковлев? Мĕншĕн ăна чыслаççĕ? / *ачасен хуравĕ*/. Мĕн тунă вăл чăваш халăхĕшĕн. / *ачасен хуравĕ*/. Çапла. Чăваш халăхне вулама, çырма вĕрентес ырă, çутă ĕмĕт И.Я.Яковлевăн çамрăк чухнех çуралнă. Университетра вĕреннĕ вăхăтра юлташĕсемпе чăваш алфавитне йĕркеленĕ, букварь çырнă, шкулсем уçнă.

«Чăвашсен ырлăхĕсĕр, телейĕсĕр пуçне пурнăçра манăн урăх тĕллев пулман та» - тенĕ Иван Яковлевич Яковлев. Унăн пурнăçĕ çак тĕллевсене пăхăнса пынă та. Чăваш ачисем вулама, çырма пултарччăр тенĕ. И.Я.Яковлев ачасем валли нумай калавсем юптарусем çырнă. Унăн кашни калавĕ ăса вĕрентет, тĕрĕс пурăнма хушать. Акă итлесе пăхăр-ха И.Я. Яковлев çырнă «ЙĂЛĂНТАРНИ» калава. *( х/м №1)*

**Ертсе пыракан**: Ачасем, калăр-ха çак калав мĕнле пулма вĕрентет. / *ачасен хуравĕ*/.

**Ертсе пыракан**: Тĕрес, маттурсем. Çынăнне нихăçан та ăмсанмалла та мар, кĕвĕçме те юрамасть. Тимлĕн итлĕр тепĕр калавне. Вăл «СУЕÇĔ» ятлă. *(х/м.№2)*

**Ертсе пыракан**: Ачасем, çак калавпа мĕн каласшăн пулнă И. Я. Яковлев?

/ *ачасен хуравĕ/*.

**Ертсе пыракан**: Тĕрĕс. Пурнăçра суйма, улталама юрамасть. Хăвах шар куратăн. Ахальтен мар: ырă- ырă çумне, усал- усал çумне çыпăçать тенĕ.

**Ертсе пыракан**: И.Я.Яковлев çырнă «КАШКĂРПА КАРЧĂК» юптаруна сире халĕ шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ кăтартса парĕ. *(х/м. №3)*

**Ертсе пыракан**: И.Я.Яковлев чăваш халăхне питĕ юратнă, Чăваш çĕр-шывĕ чечекленсе аталантăр тесе тăрăшнă, тăван халăхăн ывăл-хĕрĕ çуралнă çĕр-шывшăн мухтантăр, ăна пуянлатассишĕн тăрăшса ĕçлетĕр тенĕ. .

Чăваш халăхĕн телейне, унăн пуласлăхне И. Я. Яковлев вырăс халăхĕпе туслă пурăнсан кăна тупма пулать тенĕ. Тăван чăваш халăхне валли тĕлĕнмелле ырă, вĕрентекен халал хăварнă. И.Я.Яковлев çапла çырса хăварнă:

«Вырăс халăхĕ питĕ пысăк халăх. Вăл ырă кăмăллă, ăслă. Эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр, вăл сире нихăçан та инкекре пăрахмĕ. Вырăс халăх савăнăçĕпе эсир те савăнар, унăн хуйхине эсир те тӳсĕр, унпа ялан тачă , туслă пурăнма тăрăшăр». Çакна эпир те пахăнса пурăнатпăр. Вырăс халăхĕпе пĕрле юнашар тăрса ĕçлесе çĕнĕ çуртсем, заводсемпе фабрикăсем, çулсем тăватпăр, савăнатпăр та хуйхăратпăр, пĕр- пĕрне пулăшса, ăнланса пурăнатпăр. Пирĕн хушăмарта нумай-нумай çулсем хушши ĕнтĕ нимĕнле хирĕçӳ те тавлашу та çук, пулман та, пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен пĕр килти пек пурăнатпăр эпир вырăс халăхĕпе. Акă пирĕн садике те вырăс ачисем çӳреççĕ, вĕсем майĕпен пирĕнпе чăвашла калаçа пуçлаççĕ, эпир те сирĕнпе, чăваш ачисем, мĕн пĕчĕкренех вырăсла калаçма вĕренетпĕр. Нумай çул туслă пурăннă пирки пирĕн çак халăхпа питĕ нумай пĕрпеклĕхсене курма пулать. Паянхи тĕл пулура эпир çакна курăпăр та. Пирĕн шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ чăваш халăхăн юррисне, ташшисене ташласа савăнтарĕç, аслă ушкăнри ачасем вара вырăс халăхĕн юррисемпе ташшисене кăтартĕç.

Ачасем, çак икĕ халăхăн шăпи, кун-çулĕ çамăлах пулман. Тем пек йывăр вăхăтра та вĕсем хăйсен хуйхисене савăнăçлă, шӳтлĕ юрăсемпе, ташăсемпе пусарма пĕлнĕ. Акă итлесе пăхăр-ха вырăс халăх юррине.

Юрă «**Где был Иванушка**»- аслă *ушкăнри ачасем юрлаççĕ.* (*х/м .№4)*

**Ертсе пыракан**: Халĕ чăваш халăх юррине шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ шăрантарĕ.

Юрă «**Ту-ха, Ванюк, урама»** *шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ юрлать. (х/м.№5)*

(*Ушкăн варринче пĕр ача Ванюк вырăнĕнче ташлать, ытти ачасем шартлатарса кĕвĕ май алă çупаççĕ).*

**Ертсе пыракан**: Сăнарăр-и, ачасем, мĕн ятлă пирĕн юрăри ар çын ачасем? (*ачасен хуравĕ).*
Тĕрĕс. Иккĕшĕ те пĕр ятлă: Ванюк тата Иван. Тата юрăсен кăмăлĕсем мĕнлерех? (*ачасен хуравĕ).* Юррисем те иккĕшĕ те савăнăçлă юрăсем пулчĕç.
**Ертсе пыракан**: Пĕлетĕр-и, ачасем, вырăс халăхĕ чипер хĕрсен уттине мĕнле кайакпа танлаштарнине? Акăшпа. «Как лебёдушка плывёт»,-тенĕ вĕсем. Чăвашсем вара илемлĕ чипер хĕр утса кайсан: «Акăш евĕр ярăнса утать»,- тенĕ. Каллех пĕр пек шутланине курма пулать çакăнта. Вырăс хĕрĕсен ташшинче те, чăваш пикисен ташшинче те мĕн чухлĕ пĕр пек хусканусем сăнама пулать. Ташăра вĕсем хăйсен сăпайлăхне, илемлĕхне, хӳхĕмне кăтартнă. Курса савăнăр-ха чăваш пикисен ташшине.
*«Çеçен хирте ай шур хурăн» .( урăх илемлĕ чăваш халăх кĕвви те юрать) кĕвĕпе шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕнчи хĕр ачасем чăваш ташши ташлаççĕ.*
**Ертсе пыракан**: Вырăс хĕрсен ташшине сăнар. Çак илемĕ ташăна сире аслă ушкăнри хĕр ачасем парнелĕç.
*«Во поле береза стояла»( урăх илемлĕ вырăс халăх кĕвви те юрать) кĕвĕпе аслă ушкăнри хĕр ачасем вырăс хĕрсен ташшине ташлаççĕ.*
**Ертсе пыракан**: Чăнах та маттур пирĕн ачасем! Юрлама та, ташлама та пит ăста.
Çапла туслă пурăннă çак ик халăх. «Туслă пурăннине нимĕн те çитмест»,- тенĕ мĕн авалтан пирĕн мăн асаттесемпе мăн асаннесем. Эпир вăсене халĕ ваттисен сăмахĕсем тетпĕр. Çакăн пек туслăх çичен калакан ваттисен сăмахĕсене халĕ аса илсе асра тытар. Вĕсем чăвашăн та, вырăсан та нумай. Эсир пĕлетĕр-и вĕсене? *(ачасем хăйсем пĕлекен чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсене калаççĕ).* Çапла , ачасем, тус вăл- чи хакли, туслă пурăнни вара- чи пахи. Çакна нихăçан та манас марччĕ пирĕн сирĕнпе.
**Ертсе пыракан**: Ача выляса ӳсет. Эсир ачасем выляма юрататăр-и? Мĕнле вăйăсене кăмăлатăр-ха выляма? *( ачасен хуравĕ).* Эпĕ те сирĕнпе паян вăйă выляса илесшĕн. Камăл пур-и сирĕн манпа выляма? Ку вăйă нумай çул хушши пурăнать. Эпир те ача чухне выляттăмăр çак вăййа. Çак выляс вăййа вара чăваш ачисем те вырăс ачисем те вылянă.
Чăвашла « Шанкăрава куçна хупса тыт », вырăсла «Жмурки с колокольчиком». Выляса илетпĕр-и? Ачасем пысăк çаврака тăвăр-ха малтан. Кашни вăййăн хăйĕн йĕрки пур. Çак вăйăра мана икĕ ача кирлĕ. Пелетĕп, сирĕн пурин те пулас килет. Çавăнпа та сире эпĕ камсем пулассине шут сăввипе тупма ыйтатăп. Вĕсем чăвашла та вырăсла та питĕ нумай. (*Шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ чăвашла, аслă ушкăн вырăсла шутлаççĕ. Вăййа 2 хутчен выляççĕ) . (х/м.№6)*
**Ертсе пыракан**: Çак икĕ халăх хайсен çуралнă тăван çĕрне питĕ юратнă, упранă, мухтанă. Нимĕнле тăшмана та паман ăна. Мĕншĕн тесен вăл пĕрре, мĕншĕн тесен вăл ĕмĕр- ĕмĕре. ( *Икĕ ушкăнри ачасем пĕрле тăрса юрă юрлаççĕ)*

Юрă **«Тăван çĕршыв»(***сăвви Н. Сандровăн,кĕвви Н. Никитинăн*)(*х/м.№7)*

**Ертсе пыракан**: Ачасем, пирĕн тĕл пулу вĕçленсе пырать. Тата нумай пĕрпеклĕх илсе кăтартма пулать çак икĕ халăхăнне. Ку вăл чăннипех те эпир пĕр пек шутланине, курнине, сăнанине, пурăннине пĕлтерет. Çак икĕ халăх хушшинчи туслăх нихăçан та ан татăлтăр, вăл çирĕпленсе те вăйланса пытăр. Çав туслăха сирĕн малалла упрамалла, ăна эсир ан çухатăр, ан сутăр.

(*кĕвĕ май ачасем хăйсен групписене саланаççĕ).*

*Хушма материал:*

*№1* «ЙĂЛĂНТАРНИ»

*Пирĕн атте пасара каймассерен пирĕн валли кулачă илсе таврăнатчĕ. Пĕрре çапла пасартан таврăнсассăн атте пурсăмăра та пĕрер татăк кулачă валеçсе пачĕ. Мана ыттисенчен сахал панă пек туйăнчĕ. Эпĕ кулача илмесĕр, йăлăнтарса, пĕр кĕтесе кайса лартăм.*

*Атте ман еннелле çаврăнса пăхрĕ те:*

*- Мĕншĕн илместĕн тата кулачăна? - терĕ.*

*Эпĕ пĕр чĕнмесĕр ларатăп. Атте манă панă кулачă татăкне илчĕ те йăмăксене валеçсе пачĕ:*

*- Мейĕр, çийĕр Иван татăкне, вăл кĕтесре йăлăнтарса лартăр-ха! – терĕ.*

*Йăмăксем вара манăн татăка çирĕç ячĕç. Кайран ыйтасчĕ - кулачă çук.*

*Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать тесе ахаль каламан çав ваттисем.*

*№2* «СУЕÇĔ»

*Пĕр ача хирте сурăхсем кĕтсе çӳрет тет. Кашкăр куран пекки туса çынсене:*

*- Килĕр кунта! Кашкăр пур,кашкă-ă-ăр!- тесе кăшкăра пуçларĕ тет.*

*Çынсем чупса пычĕç тет, кашкăрĕ çук та тет. Çапла ку пĕрре улталарĕ тет, тепре улталарĕ тет. Кайран хайхин патне чăнах такашкăр чупса пынă тет. Хай ача çынсене чăн- чăнах кăшкăра пуçларĕ тет. Каллех суеçтерни пулĕ тесе çынсем пĕри те пыракан çук тет кун патне. Никам çукине кура кăшкăр ачанăн пĕтĕм кĕтĕвне пăва-пăва тухрĕ тет.*

*Пĕрре улталăн, иккĕ улталăн, виççĕмĕшĕнче макăрăн теççĕ ваттисем-çав ĕнтĕ вăл.*

*№3*«КАШКĂРПА КАРЧĂК»

*Автор: Выç кашкăр апат шыраса çӳрет тет. Пĕр ял патне пынă тет те хĕрринчи пӳртре ача йĕнине илтех кайрĕ тет. Тата вăл пӳртре карчăк сасси илтĕнет тет. Карчăк ачана чарать тет.*

*Карчăк: Йĕрсе чарăнмасан эп сана кашкăра парăп ак.*

*Кашкăр ăна илтсен тăпах чарăнчĕ тет.*

*Кашкăр: Ку ачана халь кăларса пăрахĕç ман валли.*

*Автор: Каçах пынăскер çур çĕрччен кĕтнĕ тет. Хайхи ларсан - ларсан татах карчăк сасси илтĕнет тет.*

*Карчăк: Ан йĕр, ачам, ан йĕр, кашкăра памăп сана; килтĕр халĕ кашкăр кунта, чукмарпа çапса вĕлерĕп ăна!*

*Автор: Ăна илтсен кашкăр шухăшларĕ тет.*

*Кашкăр: Ку пӳртре каласса пĕр тĕрлĕ калаççĕ те тăвасса урăх тĕрлĕ тăваççĕ курăнать.*

*Автор: Кашкăр вăл вырăнтан пăрахса кайрĕ тет вара.*

*№4.* «Где был, Иванушка»
*1. Где был, Иванушка?*
*На ярмарке (на базаре).*
*Что купил, Иванушка?*
*Курочку.*
*Курочка по сеничкам*
*Зернышки клюёт,*
*Иванушка в горенке*
*Песенки поёт.*

*2. Где был, Иванушка?*
*На ярмарке (на базаре).*
*Что купил, Иванушка?*
*Уточку.*
*Курочка по сеничкам*
*Зернышки клюёт,*
*Уточка по лужице*
*Взад-вперед плывет,*
*Иванушка в горенке*
*Песенки поет.*

*3. Где был, Иванушка?*
*На ярмарке (на базаре).*
*Что купил, Иванушка?*
*Барашечка.*
*Курочка по сеничкам*
*Зернышки клюет,*
*Уточка по лужице*
*Взад-вперед плывет,*
*Барашечек в садике*
*Травушку жует,*
*Иванушка в горенке*
*Песенки поет.*

*4. Где был, Иванушка?*
*На ярмарке (на базаре).*
*Что купил, Иванушка?*
*Коровушку.*
*Курочка по сеничкам*
*Зернышки клюет,*
*Уточка по лужице*
*Взад-вперед плывет,*
*Барашечек в садике*
*Травушку жует,*

*Коровушка деткам*
*Молочко даёт,*
*Иванушка в горенке*
*Песенки поет.*

*№5.* «Тух-ха, Ванюк»

*1. Тух-ха, Ванюк, пирĕн ума.*
*Эсĕ ташша пит ăста.*
*Кăвва(бхут), тут, тут!*

*2. Ташласа пар, савăнтар,*
*Эпир алă çупăпăр!*
*Кăвва(бхут), тут, тут!*

*3. Кайра эпир Ванюк хыççăн*
*Пурте ташша ярăпăр.*
*Кăвва(бхут), тут, тут!*

*№6.* Чăвашла шут вăййи:

*Шак-шак, шак кайăк,*
*Шак-шак, шак кайăк,*
*Шак кайăкне пире пар.*
*Чалма-чалма чаштăркки,*
*Сире салам пĕр салам,*
*Пире кирлĕ пĕр ача,*
*Вылямa, вылямa.*

Вырăсла шут вăййи:

*Трынцы-брынцы, бубенцы,*
*Раззвонились удальцы.*
*Диги, диги, лиги, дон,*
*Выходи скорее вон!*

*№7* «Тăван Çĕршыв»

*1. Эпир çуралнă вырăнсем ытарма çук хитре,*
*Уя тухсассăн тăрисем юрлаççĕ тӳпере.*

*Хушса юрламалли:*
*Тăван Çĕршыв, Тăван Çĕршыв , тĕнчере пĕрре*
*Тăван Çĕршыв, Тăван Çĕршыв ĕмĕр-ĕмĕре.*

*2. Тăван кассем, тăван хирсем, епле вĕсем хитре,*
*Асаттесем те аттесем юратнă çак çĕре.*

*3. Тăван çĕре упра, юрат, тăван çĕре чысла.*
*Вара сан пуранма юрать: ĕçле, ташла, юрла.*